***Васильева Татьяна Анатольевна***
учитель
МБОУ «Октябрьская СОШ»
с. Октябрьское, Чувашская Республика

# ТĔПЧЕВ ĔÇĔ «ТУСЛĂ ПУРĂННИ ПУРНĂÇА МАЛАЛЛА АТАЛАНТАРАТЬ»

***Аннотаци:*** *статья 1928–1945 çулсенче çуралнă çынсен асаилĕвĕсемпе Л. Агаковăн «Салтак ачисем» повеçне танлаштарса, Аслă Вăтаç вăхăтĕнчи халăхсен туслăхĕн темине тĕпчет. Ĕç актуаллăхĕ 2026 çулта Раççейре Халăхсен пĕрлĕхĕн, Чăваш Республикинче Халăхсен туслăхĕн çулталăкĕ иртнипе çыхăннă. Тĕллев – хайлаври ачасен сăнарĕсене вăрçă çулĕсенчи чăн ачасен шăпипе танлаштарни. Ĕçра повеçри тĕп геройсен сăнарĕсемпе паллаштарнă, Октябрьски ялĕнче 1928–1945 çулсенче çуралнисен списокне тунă, вĕсемпе интервью иртернĕ, видео çырса илнĕ. Чăн пурнăçра та, хайлавра та ачасем пĕрле ĕçлени, туслă пурăнни палăрнă: лашасемпе ĕçлени, фермăсемре ĕçлени, Атăл хĕррине хăва касма çӳрени, окоп чавни. Эвакуаципе килнĕ ачасем вырăнти шкулта чăваш ачисемпе пĕрле вĕреннĕ. Пĕчĕклех ĕçпе туслăх çĕршывшăн тивĕçлĕ çынсем пулма пулăшни çинчен пĕтĕмлетӳ тунă.*

***Тĕп сăмахсем:*** *халăхсен туслăхĕ, вăрçă ачисем, чăваш литератури, эвакуаци.*

# ИССЛЕДОВАТЕЛЬСКАЯ РАБОТА «БЕЗ ПОДДЕРЖКИ ДРУЗЕЙ НЕТ БУДУЩЕГО»

***Аннотация:*** *статья посвящена исследованию темы межнациональной дружбы детей в годы Великой Отечественной войны на примере сравнения повести Л. Агакова «Солдатские дети» (1958) и воспоминаний жителей села Октябрьское (Чувашия). Актуальность работы обусловлена объявлением 2026 года в России Годом единения народов, а в Чувашской Республике – Годом дружбы народов. Цель исследования – сопоставить образы детей в художественном произведении с реальными судьбами детей военного времени. В ходе*



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

*работы проанализированы характеры главных героев повести, составлен список жителей села 1928–1945 годов рождения, проведены интервью с очевидцами, собран видеоматериал. Установлено, что в реальной жизни, как и в повести, дети разных национальностей жили и трудились дружно: работали на коневодческом дворе, на фермах, возили хворост на берег Волги, рыли окопы. Эвакуированные дети учились в местной школе вместе с чувашскими детьми. Делается вывод, что труд и взаимопомощь, заложенные с детства, формировали достойных граждан своей страны.*

***Ключевые слова:*** *дружба народов, дети войны, чувашская литература, эвакуация.*

Кăçалхи 2026 çулта пирĕн Раççĕй çĕршывĕ Халăхсен пĕрлĕхĕн, Чăваш Республики Халăхсен туслăхĕн çулталăкне паллă тăвать. Шкул ачисем те, аслăрах ăру та паянхи кун халăх туслăхĕ пирки нумай калаçатпăр, туслă пурăннă вăхăтсене аса илекен ватăсен калаçăвне илтсе шухăша каятпăр. Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçи вăхăтĕнчи халăхсен туслăхĕ уйрăмах пысăк тĕслĕх. Шел пулин те, çав йывăр тапхăра ас тăвакансем те кунран кун сахаллансах пыраççĕ. Çамрăк ăру иртнĕ вăрçă çинчен историпе литература урокĕсенчен çеç пĕлет. Кино курма та, кĕнеке вулама та юратсах каймасть вăл. Çавăнпа та вăрçă вăхăтĕнче пурăннă ват асатте-асаннесенчен туслă пурăнни пирки аса илӳсем пуçтарса юласси – пирĕн тивĕç. Пирĕн ĕç кăçалхи çул уйрăмах актуаллă тата çитĕнсе пыракан ăрушăн пысăк пĕлтерĕшлĕ пуласса шанатпăр.

Чи малтанах вăрçă вăхăтĕнчи ачасен ĕçĕ-хĕлĕ çинчен çырнă Л. Агаковăн «Салтак ачисем» повеçĕпе паллашрăмăр. Ăна вуласа тухсан пирĕн ыйту çуралчĕ: Пирĕн ялти ачасем вăрçă вăхăтĕнче мĕнле пурăннă-ши? Ытти халăх çыннисемпе килĕштерсех пурăннă-ши? Хамăр ĕçе эпир «Туслă пурăнни пурнăçа малалла аталантарать» тесе ят патăмăр.

Ĕç тĕллевĕ çапла пулчĕ: Л. Агаковăн «Салтак ачисем» хайлаври ачасен туслă пурнăçне Октябрьски ялĕнчи вăрçă çулĕсенчи ачасен пурнăçĕпе танлаштарса тишкересси.


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Ку ĕçе пурнăçлама задачăсем палăртрăмăр.

1. Л. Агаковăн «Салтак ачисем» повеçĕнчи ачасен ĕç-хĕлне тишкересси.

2. Вырăнти ял администрацийĕпе çыхăну тытса 1928–1945 çулсенче çуралнă çынсен списокне тăвасси.

3. Вăрçă умĕн çуралнă çынсенчен вăрçă çулĕсенчи çынсен туслăхĕ пирки ыйтса пĕлесси.

4. Чăваш хаçачĕсенче вăрçă ачисем çинчен каланă материала тишкересси.

5. Шкул музейĕ валли вăрçă ачисем çинчен материал пухасси.

«Салтак ачисем» повеçе Л. Агаков 1958 çулта çырнă. Ку повеçри ĕçсем Сĕнтĕр районне кĕрекен «Çĕнĕ самана» колхозра пулса иртеççĕ. Эпир вĕсен ячĕсене, кашни ачан характеристикине турăмăр.

Ялти ачасем:

Евгенипе Аркаш – уйрăлми туссем. Вĕсем иккĕшĕ те улттăмĕш класра вĕренеççĕ, пĕр парта хушшинче лараççĕ. Евгенин сасси питĕ лайăх, хор юрланă чух ялан ăна пуçлаттараççĕ, уйрăммăн та юрлаттараççĕ. Аркаш спектакльсенче выляма ăста, пуринчен ытла унăн кулăшла рольсем аван тухаççĕ.

Евгени – ырхантарах, хăйĕн çулĕсене кура мар çӳллĕ ача, çӳçĕ сарă та çемçе, куçĕсем уяр кунхи пĕлĕт пек кăвак, пичĕ çинче пăч-пач чĕкеç шатрисем пур, кăмăлĕ те çемçе унăн, пулчĕ-пулмарĕ çилленсе каймасть, васкамасăр, мăн çын пек шухăшласа, сăмахсене татса калаçать.

Аркаш – лутрарах, анчах платна, хул пуççийĕсем сарлака, урисем кĕске те çирĕп, çӳçĕ-пуçĕ те, куçĕсем те хуп-хура; хăй вăл çивĕч, лара-тăра пĕлменскер, пур чухне те питĕ хăвăрт калаçать, наччас вĕриленсе каять, хăйне кӳрентерекен пулсан ăна çăт-çат паркаласа илме те яланах хатĕр…

Вĕренессе вĕсем иккĕшĕ те тăрăшса, лайăх вĕренеççĕ. Учительсем вĕсене иккĕшне те юратаççĕ, ачасем те туслă вĕсемпе.

Палля – çырма леш енче пурăнакан Хĕрлĕ Мари ывăлĕ, амăшĕ пекех хĕп-хĕрлĕ çӳç-пуçлăскер. Хăй начар веренет – ăс-пуçĕ çитменнипе те мар, кахалли-пе, анчах алхасас-иртĕнес, хăйĕнчен кĕçĕнрех ачасене кӳрентерес енĕпе вара пуринчен те ирттерет. Вăрттăн чĕлĕм те туртать вăл.



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Колькка – ялти лавккара приказчик пулнӑ Карасӑм Иванч ывӑлӗ. Ытти чылай ачасенчен ҫӳллӗрех пулсан та имшеркке тата шутсӑр йыншака вӑл. Пулчӗ-пулмарӗ лӗр-р…макӑрса ярать. Хӑй питӗ чее, улталама, элеклеме юрататъ. Хӑех мӗн те пулин туса хурать те ҫавӑнтах ҫынсем ҫине ярать.

Марине – 4–5 ҫулхи ача.

Эвакуаципе куҫса килнисем.

Петрусь, Калери Дорожка – белорус ачисем, амӑшӗпе пӗрле эвакуаципе килнӗ. Петрусь Евгенипе Аркашпа пӗр ҫулхисем – 6 класра вӗренеҫҫӗ, Калери 9 ҫулта.

Эстонецсем: Эльга – 3 ҫулта, Ян – 12 ҫулта, Юули – 8 ҫулта. Вӗсен хушамачӗ Киккас.

Ачасем пурте туслӑ пулнине пӗлтӗмӗр. Вӗсем пур ӗҫе те чӑваш ачисемпе тан ӗҫленӗ, шкулта пӗрле вӗреннӗ.

Ҫакӑнпа пӗрлех вырӑнти ял администрацийӗпе ҫыхӑну тытса халь пурӑнакан 1928–1945 ҫулсенче ҫуралнӑ ҫынсен списокне турӑмӑр. Октябрьски ялӗнче ҫуралнисем питӗ сахаллӑн юлнӑ – 6 ҫын ҫеҫ. Ватӑ ҫынсенчен ыйтса пӗлтӗмӗр, вӗсем каласа панисене видео ӳкертӗмӗр.

Унтан хайлаври ачасемпе ҫыхӑннӑ ӗҫ-хӗле эпир вӑрҫӑ ҫулӗсенчи Октябрьски ялӗнчи ачисен пурнӑҫӗпе танлаштартӑмӑр. Унтан таблицӑна вырнаҫтарса тишкертӗмӗр.

Хайлавра асӑннӑ колхоз «Ҫӗнӗ самана» ятлӑ, Октябрьски райцентрӗнчи колхоз «Ударник» ятлӑ пулнӑ. Ялта «конный двор» пулнӑ, унта колхозниксем черетпе ӗҫленӗ, пур ӗҫе те ытларах арҫын ачасем тунӑ, ватӑ ҫын Федоров Дмитрий Федорович – аслӑ конюх пулнӑ,вӑл пур ӗҫе те йӗркелесе тӑнӑ. Ӗҫҫи чухне арҫын ачасем лашасемпе пур ӗҫе те тума ҫӳренӗ. Ӗне, сурӑх, чӑх, сысна фермисем юнашар ял ҫумӗсенче пулнӑ, унта ытларах ҫав ял ачисем ӗҫленӗ.

Октябрьскинчи «Ударник» колхоза та эвакуированнӑйсене илсе килнӗ – пӗтӗмпе 21 ҫемье. Вӗсем Ленинград хули ҫывӑхӗнчен пулнӑ. Ачисем ялти шкулта вӗреннӗ. Акӑ мӗн каласа парать ун ҫинчен Иванов Анатолий Иванович:


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

«1941çулхи хӗле кӗрес умӗн яла эвакуированнӑйсене илсе килнӗ пулнӑ. Куна эпӗ питех ас тумастӑп. Анчах пирӗн патӑрта пӗр вырӑс майрипе унӑн ачи пурӑнатчӗç. Эпир вӗсемпе вырӑсла калаçаттӑмӑр. Манпа пӗр класра та вырӑс хӗр ачи вӗренетчӗ. Питӗ тӑрӑшуллӑччӗ вӑл, отличницӑччӗ. Вӑл камсем патӗнче пурӑннине ас тумастӑп. Пӗчӗк пӳртрех çапла 8 çын пурӑнса хӗл каçрӑмӑр. Апатне те пӗрлех çинӗ, туслӑ пурӑннӑ. Эвакуированнӑсем пӗр хӗл каçнӑ пек çеç ас тӑватӑп. Лененград çывӑхӗнчен килнӗ тетчӗç вӗсене.»

Вут-шанкӑ çитменнипе ачасемпе хӗрарӑмсем Атӑл хӗррине хӑва касма çӳренӗ. Ку вӑл Октябрьскинчен 12 çухрӑм ытла. Унта вӗсем лашапа мар, çуна туртса кайнӑ.

Унсӑр пуçне «Ударник» колхоз çамрӑкӗсем окоп чавма кайни пирки аса илеççӗ. Окопне Атӑл çыранӗн сылтӑм енче, шӑпах Октябрьски ялӗнчен 8–12 çухрӑмра чавнӑ. Халӗ Шупка ялӗ çывӑхӗнче ку вырӑна асӑнса лартнӑ палӑк пур.

Çапла вара хамӑр ӗçе пӗтӗмлетрӗмӗр.

Л. Агаковӑн «Салтак ачисем» повеçӗнчи ӗçсем чӑн пурнӑçра пулса иртнисемех. Ачасен сӑнарӗсемпе вӗсен туслӑхӗ, ӗçӗ-хӗлӗ питӗ пӗр евӗрлӗ пулни куç кӗретех.

Вӑрçӑ çулӗнче ӳснӗ ачасем пӗчӗклех туслӑх мӗн иккенне пӗлнӗ, алла çурла, çава, шыв кӗвенти тата ытти ӗç хатӗрӗ тытнӑ. Пурте сывӑ та тӗрӗс-тӗкел ӳснӗ, нимӗнле ӗçрен те пӑрӑнса юлман. «Пире аннесем тӗрӗс воспитани панӑ, хальхи вӑхӑтри ачасене пӗчӗкле ӗçе вӗрентменнине эпир сивлетпӗр, чӑн-чӑн этем ӗçпе пиçӗхсе ӳсмелле, çавӑн чухне кӑна унӑн ӳсӗмӗсене пурнӑçра курма пулать, вӗсем çӗршывшӑн усӑллӑ çынсем пуласса шанас килет», – теççӗ ватӑ çынсем.

Пӗчӗклех ӗçпе пиçӗхсе ӳснӗ ачасем пурте çӗр-шывшӑн усӑллӑ, тивӗçлӗ çынсем пулнӑ.

Пирӗн вӑрçӑ ачисенчен пур енчен те тӗслӗх илсе тӑмалла. Туслӑ пурӑнни çеç пурнӑçа малалла аталантарать.

***Список литературы***

1. Агаков Л.Я. Салтак ачисем: Повеçпе калав / Л.Я. Агаков. – Шупашкар: Чӑваш кӗнеке изд-ви, 1990.



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

2. Астăвăм – Память / Рос. Федерация, ЧР; редкол.: Н.В. Пыркин (предс.) [и др.]. – Чебоксары: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1996.

3. Октябрьски ял хутлăхĕн докуменчĕсем.

4. Хыпар. – 2012. – 5 çу; 22 çĕртме; 27 çĕртме; 2013. – 30 çĕртме; 2014. – 6 юпа.


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)